## ЧЁМПЁР ЕН ЮРĂÇИ

1957 çул. Эпир Иван Кузнецов критик-писательпе пĕрле çамрăк поэтсен сăввисене пухса «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнеке кăлартăмăр. Кĕнеке редакторĕ Юрий Скворцов поэт пулнăччĕ. Çапла, кĕнеке валли пичетлеме сăвăсем хатĕрленĕ чухне манăн алла «Йăмра» ятлă сăвă лекрĕ. Сăвă авторĕ Анатолий Ермилов халĕ Юман хушаматпа пичетленекен поэт иккенне пĕлтĕмĕр. Ун сăвви пирĕн кăмăла кайрĕ. Ăна, пĕр кăмăллă пулса, кĕнекене кĕртес, терĕмĕр. Сăвă:

Каç карчĕ чаршавне мăн йăлăмра,
Çӳл тӳпере çут çăлтăрсем çунаççĕ.
Канать, тĕлĕрет кăшт тайăлнă йăмра,
Ун айĕнче яш-кĕрĕмсем выляççĕ.
Ĕç хыççăн лăпкă, савăк каçсенче
Кунта аван-çке вăйă вылямашкăн,
Йăмра çумне сĕвеннĕ сак çинче
Чун савнипе сăпайлăн калаçмашкăн...

текен йĕркесемпе пуçланать. Çакăн пек илемлĕн янăракан, чун-чĕрене çĕклекен йĕркесемпе вĕçленет. Анатолий Федорович Юманпа эпĕ ун чухне, «Çеçпĕл çеçкисем» кĕнеке тухнă кунсенче, паллашнăччĕ пулас. Вăл тĕлĕнмелле ĕçчен, пултаруллă, сăпай поэт иккенне туйса илтĕм. Унăн произведенийĕсене эпĕ яланах юратса вулатăп. Уйрăмах поэтăн «Телей сăпки», «Чĕмпĕр чулĕ калаçать» поэмисене, «Çулпуç сăпки» сăвă ярăмне кăмăллатăп. Вĕсене вуласа тухнă хыççăн Анатолий Федорович пултарулăхĕ, сăвă-юрă çырас ăсталăхĕ ӳссех пынине туйса илтĕм. Юман çырнă произведенисене ватă çынсем те, ачасем те хисеплеççĕ, юратса вулаççĕ. Ку пире пурне те савăнтарать.

Анатолий Федорович Юман 1932 çулта Ульяновск облаçĕнче, Чăнлă районĕнче, чăвашсем йышлă пурăнакан тăрăхра çуралнă. Темиçе çул каярах кăна-ха эпир вăл утмăл çул тултарнине паллă турăмăр.

Ку кĕнекере поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисемпе поэмисем пичетленеççĕ. Унта «Пурнăç аварĕ» сăвăлла роман тĕп вырăн йышăнать. Унăн малтанхи сыпăкĕсемпе эпир маларах «Телей сăпки» ятлă пысăк сулăмпа çырнă поэмăра паллашнăччĕ. Унтанпа чылай шыв-шур юхрĕ. Автора çав пысăк калăплă хайлаври пулăмсемпе персонажсен шăписем пултарулăх çулĕ тăршшĕпех канăç паман иккен. Çапла вара событисемпе сюжет йĕрĕсем та аталанса пынă, юлашкинчен вĕсем сăвăлла романа çити ӳснĕ. Акă пирĕн умра - чăваш тĕнчи. Ăна автор ялти ахаль хресченĕн тăвата ăру сыпăкĕ урлă кăтартса пама тăрăшнă.

Çаплах «Тăван» ялта» тата «Йывăç велосипед» поэмăсемпе те вулакансем малтанхи хут паллашаççĕ. Çырасса вĕсене те тахçанах çырнă-ха. Ку е вăл хайлав шăпи те, çын шăпи пекех, тĕрлĕрен килет. Асăннă хайлавсен вулакансем патне тухмалли çулĕ те тумхахлă пулнă. Çулсем иртнĕ хыççăн вĕсене темиçе хутчен че чутлама, саваласа якатма тивнĕ.

«Ултав» ятлă пĕчĕк поэма - аслă ăрури çынсен пурнăçне кĕрсе вырнаçнă ăс-хакăл пуянлăхне çĕнĕ куçпа хаклама вĕрентекен, уйрăм çынна пысăка хунă вăхăтра ку е вăл событие идеологие май пăсса кăтартнă «куçпăвансене» тăрă шыв çине кăларакан гражданла çивĕч туйăмпа çырнă хайлав.

Кĕнеке поэтăн тĕрлĕ çулсенче çырнă сăввисемпе уçăлать. Вĕсем, тĕпрен илсен, халиччен ниçта та пичетленмен.

Анатолий Юмана эпир Чĕмпĕр поэчĕ тетпĕр. Анчах ку вăл унăн тавра курăмĕ ансăрланса ларнине пĕлтермест. Пачах урăхла, чĕре витĕр тухнă вырăнти пулăмсем ăна тĕнчепе этем кун-çулне чăваш чунĕпе ăнланса илме май параççĕ. Поэтăн çĕнĕ кĕнекинчи хайлавсене те шăп та шай автор этем пурнăçĕ çине кун-çул тӳпинчен тӳрĕ те çивĕч куçпа пăхса çырнăскерсем тес пулать. Çакна эпир унăн кĕнекине кĕнĕ сăввисемпе поэмисенче, уйрăмах сăвăлла романĕнче туллин туйса илетпĕр. Вĕсенче автор пултарулăхĕ çĕнĕ енчен палăрать.

Ĕмĕр пуçламăшĕнче чăвашсен малтанхи юратăвĕ - «Нарспи» поэма тĕнчене килнĕ хулара ĕмĕр вĕçĕнче чăваш поэзийĕ тепĕр хут сас парса ентешсен чунне вăратма пултарни хăех, пирĕн шутпа, калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май ман Анатолий Юмана, чăвашсен ятлă-сумлă поэтне, Раççей Федераци культурин тава тивĕçлĕ ĕçченне, хамăн ĕçри шанчăклă тусăма, юлташăма пĕтĕм чун-чĕререн хисеплесе, телейлĕ çул сунса çапла калас килет:

Эпĕ саншăн çаплах савăнатăп,
Тус-юлташăм, тăванăм Юман.
Пуç тайса ырлăх-сывлăх сунатăп,-
Пурах шанчăк çумра эс пулсан.

Чăваш халăх ятне эс ямарăн
Ĕмĕрех ĕçчен çын пулнăран.
Туслăха, çынлăха шав упрарăн,-
Тавах уншăн сана чун-вартан!

*Васлей ДАВЫДОВ-АНАТРИ,*
*Чăваш халăх поэчĕ.*